❋ Экономика

# ШАНЧĂКЛĂ АТАЛАНУ КИРЛĔ

## ПЫСĂК ТУХĂÇСĂР МĔНЛЕ–ХА?

«Атлашевский» кооперативăн 2001-2005 çулсенчи производство кăтартăвĕсемпе паллашма тӳр килчĕ. Хăш-пĕр цифрăсене илсе кăтартам-ха.

Аван: акакан çĕрсен лаптăкне 2004-2005 çулсенче, районти ытти хăш-пĕр хуçалăхсемпе танлаштарсан, нумаях мар – 158 гектар çеç чакарнă. Анчах вĕсен лаптăкне 2003 çул тĕлне 3866 гектара çитернĕ, 2005 çулта вара 3182 юлнă – 684 гектар чакнă. Ӳрăхла каласан, кăтарту аялалла сулăннă. Уйрăмах тымар çимĕç культурисен лаптăкĕ çулсерен пĕчĕкленсе пынă (га): 2002 ç. – 1676, 2003 ç. – 1559, 2004 ç. – 1495, 2005 ç. – 1311.

| Тухăç: (кашни гектартан, центнерпе) | 2001ç. | 2002ç. | 2003ç. | 2004ç. | 2005ç. | 2006ç. |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Тĕш тырă | 30,1 | 17,5 | 23,7 | 14 | 15,7 | 13,5 |
| Çĕр улми | 96,6 | 106,1 | 141 | 177 | 122 | 101,5 |
| Тымар çимĕç | 386 | 578,2 | 496,6 | 373 | 380 | |
| Пахча çимĕç | 442,6 | 263,5 | 249,3 | 235 | 337 | 218,9 |
| Курăк утти | 20,9 | 21,1 | 30 | 50 | 30 | |
| Çерем утти | 27,0 | 13,0 | 21,0 | 18,5 | 26,9 | |

Куратпăр ĕнтĕ, тĕш тырă тухăçĕ 2001 ç. тĕлĕнмелле лайăх – 30,1 ц, 2003 çулсăр пуçне ытти çулсенче мухтанмаллах мар. Сăлтавĕ: «Çут çанталăк паман...» Ытти кăтартусем те пĕрре лайăхланса, тепре начарланса пынă.

Тĕш тырă пухса илнĕ (тоннăпа): 2001 ç. – 3713,9, 2003 ç. – 2791,6, 2004 ç. – 2294, 2005 ç. – 2405,9. Пахча çимĕç: 2001 ç. – 5046,2, 2002 ç. – 2713,6, 2003 ç. – 2643,1, 2004 ç. – 2350,0. Кунта та чакса пынине асăрхатпăр.

Калас пулать, хуçалăхра утă хатĕрлессине начар мар йĕркеленĕ. Тора çумăр панине кура туса илеççĕ.

Çакă курăнать: хуçалăх ӳсен-тăран культурисенчен, çав шутра тĕш тырăран, пахча çимĕçрен, çĕр улмирен, 2001 ç. – 1679, 2002 ç. – 2330, 2003 ç. – 1871, 2004 ç. – 193, 2005 ç. 1790 пин тенкĕ тупăш илме пултарнă. Ку аван ĕнтĕ. Анчах тухăç татах та лайăхрах пулсан тупăшĕ чылай пысăкрах пулмалла. Пасар саманинче пĕр-икĕ мĕльон тенкĕ пысăк хуçалăх ĕçĕнче курăнмасть те.

## ЙЫШ ЧАКНĂ

Çапла, «Атлашевский» – пахча çимĕçпе кăна мар, выльăхпа ĕçлекен хуçалăх та. Тен, ку енĕпе пысăк тупăш илеççĕ. Пăхар-ха.

Майракаллă шултра выльăх шучĕ чакса пырать: 2001 ç. – 2423 пуç, 2002 ç. – 2332, 2003 ç. – 2303, 2004 ç. – 1811, 2005 ç. – 1532. Малтан хуçалăхра сăвакан ĕне 800 пулнă, халĕ – 600. Хисепне техника сăлтавĕсене пула чакарнă теççĕ. Апла-и, капла-и, çавна пула хуçалăха пырса кĕрекен тупăш нумай чакнă.

«Атлашевский» сысна хисепне ӳстерме тăрăшать. Халĕ 413 пуç. Тĕрĕс тăвать пулĕ. Ку – тупăш илмелли çăл куçсенчен пĕри.

Сĕт кашни ĕнерен çавнашкал суса илнĕ (кг): 2001 ç. – 4055, 2002 ç. – 4227, 2003 ç. – 4005, 2004 ç. – 4451, 2005 ç. – 4015, 2006 ç. – 3800. Пĕтĕмĕшле илсен, дояркăсене мухтамалла çеç. Анчах темшĕн 2006 ç. чакарнă.

Сĕт пĕтĕмпе суса илесси çавнашкал чакса пынă (т): 2001 ç. – 3649,6, 2003 ç. – 3604,3, 2005 ç. – 3212,0. Сăлтавĕ ĕне кĕтĕвне чакарнинче. Майракаллă шултра выльăх шутне чакарса пынă пулсан та, аш-какай туса илесси аван курăнать (т): 2001 ç. – 249,4, 2002 ç. – 306,7, 2003 ç. – 304,0, 2004 ç. – 335,1, 2005 ç. – 258,8.

Выльăхран тупăш 2001 ç. – 3529, 2002 ç. 2941 пин тенкĕ илнĕ пулсан, 2003 ç. – 2588, 2004 ç. – 3659, 2005 ç. 748 пин тенкĕ тăкак курнă.

## ÇĔНĔ ШАЙ ПАТНЕ

Хуçалăха сĕт çăлса пырать темелле пуль: 2001 ç. – 3341, 2002 ç. – 4063, 2004 ç. – 784, 2005 ç. 899 пин тенкĕ тупăш панă вăл. Çапла майпа мĕн пур тăкака хупласа пыраççĕ. Анчах хупласа пĕтерме те йывăр. Налуксем тӳлеттерсе тинкене илеççĕ вĕт. Ял хуçалăх управленийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, хуçалăхăн парăмĕсем 6,5 мĕльон тенке çитнĕ-мĕн. Çав шутра ĕç укçи те пур. Апла пулсан хуçалăх сĕтрен, аш-какайран, пахча çимĕçрен, ытти культурăсенчен илекен тупăш мĕн пур тăкака хупласа пыма çитмест. Хăш-пĕр çулсенче тăкаклă ĕçлени те чăрмантарать. 2001 ç. ял хуçалăх продукцийĕ сутса – 5208, 2002 ç. – 5271, 2005 ç. 1042 пин тенкĕ тупăш илни, паллах, налуксене тӳлеме те, хуçалăхри тĕрлĕ тăкака хуплама та май панă пулĕ. Анчах 2003 ç. – 717, 2004 ç. 3466 пин тенкĕ тăкак курни укça-тенкĕ йывăрлăхне кĕртсе ӳкернĕ. Паллах, пасар саманинче тăкаклă ĕçлеме юрамасть. Ку кăна та мар, хуçалăхăн çĕнĕ тапхăра çĕкленесси пирки те шутламалла пулĕ. Çавăнпа ĕнтĕ район администрацийĕн ял хуçалăх управленийĕнче те, «Атлашевскийре» хăйĕнче те хуçалăха инвестици илсе килсе хывасси çинчен шутлаççĕ. Çак ыйтăва РФ Патшалăх Думин депутачĕсемпе те сӳтсе явнă. Хальлĕхе инвестор тупайман-ха.

«Атлашевскийре» пĕр-пĕр цех уçсан аванччĕ те. Авă, «Приволжский» учхозра е Мургкаш районĕнчи «Ударник» хуçалăхра сĕт-çу цехĕ продукци кăларать. Çавна пула хуçалăха пырса кĕрекен тупăш палăрмаллах ӳсет. Мĕнех, çĕнĕ шая çĕкленме ырă сунас килет «Атлашевский» ĕçченĕсене.

Ю.ЮМАН.

❋ Ачасен пултарулăхĕ

### ПУЛĂШУ

*Тухрăм урама, куртăм аннене,*
*Анне шыв йăтать витресемпеле.*
*Эпĕ пытăм ун патне*
*Пулăшас тесе.*

*Анне кулчĕ йăл! мана,*
*Пулăшсам тесе.*
*Илтĕм витресем, утрăм аннепе,*
*Тултаратпăр шыв, савăнса пĕрле.*

Ксения ЯРАНОВА.

### МАН ЮЛТАШ

*Пурнăçра манпа ялан*
*Пултăр лайăх тус-тăван.*
*Пур ĕçре те, вăйăра та*
*Туспала эпир ялан.*
*Ак каллех сентябрь çитрĕ*
*Эпир пуçлатпăр вĕренме.*
*Ирех шавларĕ шăнкăравĕ*
*Туспа каллех эпир пĕрле.*

Анастасия АНТОНОВА.

### КĔРХИ СĂНАР

*Кĕркуннене юрататăп,*
*Вăл çитсессĕн савăнатăп.*
*Сарă, хĕрлĕ çулçăсем*
*Тăкăнаççĕ кунсерен.*

*Кайăксем кăнтăралла*
*Ушкăн-ушкăн вĕçеççĕ,*
*Ачи-пăчи шкулалла*
*Хыпаланса чупаççĕ.*

Татьяна СКУДЕЕВА.

# ХĂЛХА АППАРАЧĔ ПУÇ МИМИНЕ ПУЛĂШАТЬ

Чылай чухне хăлха илтеслĕхĕ чакнине çын сисмест. Будильник шакканине е кайăксем юрланине илтми пулсан тин çын пăшăрханса ӳкет. Çапах малтанлăха çакă майĕпен хăех иртсе каясса шанать. Шел те, кунашкалли питĕ сайра пулать.

Илтеслĕх чакни хутшăнусем пĕрĕннинче кăна палăрмасть. Тепĕр инкек – пуç мими патне сигналсем пыма пăрахни. Çавна пула мимен илтев центрĕ сасăсене «манма» пуçлать. Ку вара уншăн – нимпĕлменлĕхпе, суккăрлăхпа танах.



Çакăнтан хăтăлма пулать-и; Пулать. Хăлха аппарачĕ илмелле. Кун хыççăн эсир чылай лайăхрах илтме пуçланине туятăр, миме тĕрлĕ сигналсене йышăнма пуçлать. Анчах хăлха протезне вăхăтра тутармалла. Кая юлсан мимене илтме çĕнĕрен вĕрентме йывăр пулать.

Эсир çынна хытăрах калама ыйтатăр. Сире килтисем «телевизора ун пекех шавлă ан яр» теççĕ-и? Апла пулсан, сирĕн хăлха илтеслĕхĕ чакнă. Мĕн тумалла?

Пулăшу ыйтма лайăх илтев центрне («Техномед» ОООна) килĕр. Кунти специалистсем слухопротезированин тĕнчери чи лайăх центрĕсенче стажировкăра пулнă. Опытлă врач-сурдологсем илтеслĕх чакнин шайне палăртĕç, ăста инженерсемпе техниксем Сире юрăхлă хăлха вкладышĕ хатĕрлесе парĕç.

Пирĕн патра завод хакĕсемпе сутакан пахалăхлă тĕрлĕ хăлха аппарачĕсем, комплектлакан япаласем (батарейкăсем, аккумуляторсем, заряд устройствисем) пур. Гаранти вăхăтĕнче тата ун хыççăнхи тапхăрта пăхса тăратпăр. Кашни çынпа уйрăммăн ĕçлетпĕр.

Пирĕн адрес: Шупашкар хули, Сверчков урамĕ, 15 а çурт. Телефон: 41-36-77. Ĕç вăхăчĕ: тунти кун – эрне кун – 9-тан пуçласа 18 сехетчен, шăмат кун – 9-тан 15-чен.

Профессионалсене шанăр. Сасăсен тĕнчине упраса хăварăр!

❋ Коммуналлă хуçалăх

# ÇИРĔП МЕРĂСĂР ĔÇ КУРĂМЛĂХĔ ТЕ ÇУК

***Пĕлтĕртен вара муниципаллă тата приватизациленĕ хваттерлĕ çуртсене коммуналлă хуçалăх енĕпе пăхса тăрассине управляющи компанисем пурнăçлама тытăнчĕç.***

Тĕрĕссипе, хваттер хуçисен ирĕкĕпе пулчĕ вăл. ЖКХ ĕçĕ-хĕлĕпе кăмăлсăр пулнипе, нумай ыйтăва татса парайманнипе çĕнĕлĕхе кĕртме тиврĕ. Эпир яланах ыйтма, кĕтме хăнăхнă мар-и-ха? Хамăр вара коммуналлă хуçалăх кӳрекен ырлăхшăн вăхăтлă тӳлесе тăма манатпăр. Тӳрĕ кăмăлтан татăлса пыракансем ку сăмахсене йывăра ан илччĕр те, сăмах пĕлсе тăнă çĕртех парăма ӳстернĕçемĕн ӳстерсе пыраказем пирки пырать. Ахăртнех, вĕсене айăплама çирĕп саккун çукки иждивенецла пурăнма май парать. Чăн та, республикăра пысăк парăмлă е муниципаллă пурлăха антисанитарилле условисенче тытса тăнăшăн кăларса янă тĕслĕхсем пулнă-ха, районта вара халăх сучĕ ку таранччен ун пек йышăну туман.



Фото ӳкерчĕкĕ авторăн.

***Ю.В.Гусаров суд приставĕ (лараканни) пурлăха арестлеме документ хатĕрлет.***

Тутаркассинчи управляющи компани кăçал та хăйсен тӳрĕ тивĕçне пурнăçланипе пĕрлех парăмлă хваттер хуçисемпе çине тăрса кĕрешме палăртать. А.А.Чумаков юрист-консультант палăртнă тăрăх, кăçалхи çул тĕлне 150 яхăн тавăç, пурĕ 2,5 миллион тенкĕлĕх, суда тăратнă. Вĕсенчен 40 процентĕ суд пуличчен е суд вăхăтĕнче парăма татнă. Тепĕр 10 процентне суд приставĕсем шыраса илнĕ. Паянхи куна хваттер хуçисен Тутаркассинчи управляющи компани умĕнчи парăмĕ 3,5 миллионна танлашать. Çак укçа-тенкĕ 30 çурта капиталлă юсав тума, вăл шутра пăрăхсене улăштарма, çитнĕ пулĕччĕ. Анчах никамăн та харампырла пурăнма ирĕк çук, çавăнпа кăмăлпа тӳлеменнисенчен те шыраса илеççех.

Теприсем пĕчĕк ача пуррипе хӳтĕленеççĕ, куççуль юхтарса кăтартаççĕ е чĕрре кĕрсе хирĕç тăма пăхаççĕ пулин те, саккун хушнинчен иртеймĕн. Иртнĕ çул вĕçĕнче, сăмахран, управляющи компани тата суд приставĕсен пуçарăвĕпе парăмлисен пурлăхне арестленĕ çĕрте пулма тӳр килчĕ. Йăваш чĕреллисене ку ӳкерчĕке пăхма та сĕнмен пулăттăм, анчах çирĕпрех мера йышăнмасан парăмсем татăласси иккĕленӳллĕ. «Ачасем мĕн çине выртса çывăрĕç-ха?» – тесе йăлăнсан та диванпа икĕ креслоран уйрăлма тиврĕ пĕрисене. Нумайлăха мар пулин те. Тепĕр кунах укçа тупма пултарнă кил хуçи арăмĕ. Унччченхи кун вара вĕсенне телевизор арестленĕ. Паллах, тар кăларса пухнă тупрана ют алла никамăн та парас килмĕ. Хама юлмасан, сире те ан пултăр тесе арест хунă пурлăха ӳкерсе ватма та хăтланнă хĕрарăм.

Ĕç вырăнĕсенче вăхăтра шалу укçи тӳлесе тăман ертӳçĕсем хăйсен рабочийĕсене йывăр лару-тăрăва кĕртсе ӳкереççĕ. Тĕслĕхрен, парăмлă хваттер хуçисен списокĕнче «Шупашкар бройлерĕ» АУО, «Атлашевский» ял хуçалăх предприятийĕнче ĕçлекенсем тĕл пулаççĕ. Арестленĕ пурлăх вара хака каймасть, 4-5 пин тенкĕпе туяннă телевизора, сăмахран, 700-800 тенке хаклаççĕ. Килтен пурлăх çухалать, çав вăхăтрах парăм та татăлса пĕтмест.

Кăçалтан вара япаласене арестлени çеç мар, 1, 2, 3 пулĕмлĕ хваттерсенчен кăларса ярса пĕчĕкрех лаптăклă, начартарах условиллĕ вырăна куçарасси практикăна кĕрĕ. Андрей Алексеевич каланă тăрăх, унашкал резерв фончĕ тума вĕсен майсем пур-мĕн. Виçĕ пӳлĕмлĕ хваттертен типлă секциллĕ пӳлĕмсем тума пулать, виçĕ çемье валли вырăн пулчĕ те. Чи малтанах ку хăрушлăх арестлеме пурлăх çуккисене (ку категорие чи малтан эрех ĕçсе çӳтă кун курманнисем кĕреççĕ) пырса тивĕ.

А.ИЗМАН.



# ПЕНСИОНЕР

РАЙОНТИ ПЕНСИОНЕРСЕНЕ ХАЛАЛЛАНĂ ЯТАРЛĂ КĂЛАРĂМ



## ЮБИЛЕЙ ЯЧĔПЕ

Физкультурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ В.И.Смородинов январĕн 6-мĕшĕнче 70 çул тултарнă. Хăйĕн юбилейне халалласа январĕн 27-мĕшĕнче Апашра ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе 12-мĕш турнир ирттерет, 10 сехетре пуçланать. Унта хутшăнма хăйĕн вĕренекенĕсене йыхравлать. В.И.Смородинов спорта явăçтарнипе 18 çамрăк, çав шутра хăйĕн икĕ ывăлĕ те, спорт мастерĕн кандидачĕ пулса тăнă. Вăл ертсе пынипе ирĕклĕ майпа кĕрешекенсем январĕн 8-9-мĕшĕсенче И.Григорьев парнисене çĕнсе илессишĕн Шупашкарта иртнĕ ăмăртусене хутшăннă, 5-мĕш класри В.Тунгулов пĕрремĕш вырăн çĕнсе илнĕ, килне телевизорпа таврăннă. 9-мĕш класри А.Краснов иккĕмĕш вырăна тивĕçнĕ, ăна та хаклă парнепе чысласа янă.

Виталий Иванович, пĕтĕм Раççейри инвалидсен обществин членĕ пулнă май, районти инвалидсен организацине ăмăртусем ирттерме нумай пулăшать.

Юбилей ячĕпе ăна «Тăван Ен» хаçат та ырă сунать.

С.СЕРЕГИН.



Ю.МИХАЙЛОВ фото ӳкерчĕкĕ.

В.И.Смородинов.

## УСĂЛЛĂ ТĔЛ ПУЛУ

Хыркассинчи ветерансен çуртĕнче ваттисене пăхса тăракансем декабрь уйăхĕнче Красноармейскинчи Чатукассинчи ветерансен çуртĕнче пулса курнă. Унта пурăнакансене мĕнле пăхни кăсăклантарнă вĕсене. Культура мероприятийĕсем те интереслентернĕ. Кĕскен, пĕрпĕрне ĕçре кирли икĕ енĕн те пур, çавăнпа малашне çыхăну тытма палăртнă.

## СПЕКТАКЛЬ КУРНĂ

Шупашкар районĕнчи халăха социаллă пулăшу паракан центр иртнĕ çултаlăк вĕçĕнче ветерансен пĕр ушкăнне Чăваш патшалăх академи драма театрне илсе кайнă. Вăтăсене «Парнеллĕ туй» спектакль питĕ килĕшнĕ.

## МĂНАСТИРТЕ ПУЛНĂ

Кăшавăшри ветерансен çуртĕнче пурăнакансене ушкăнпа нумаях пулмасть Ишлейри 2-мĕш поликлиникăна диспансеризаци тухма илсе кайнă. Врачсемпе медсестрасем вĕсене хапăл туса кĕтсе илнĕ, сывлăхĕсене тимлĕн тĕрĕсленĕ.

Кунта пурăнакансем Çĕнĕ çул умĕн Тихвин мăнастирне çитсе курнă. Каялла таврăннă чухне, çула май, Шуршăлти Космонавтика музейĕнче пулнă, А.Г. Николаев летчик-космонавт вил тăпри умĕнче пуç тайнă.

## ВĂХĂТРА КУÇАРМАÇÇĔ

«Раççей Федерацийĕнче пенсие обязательнăй йĕркепе страхласси çинчен» саккунпа килĕшӳллĕн пирĕнтен кашниех хăй ĕçлекен предприяти-организаци пенси фондне страховка тӳлевĕ куçарса пырсан кăна обязательнăй йĕркепе хăйне страхланă правăна пурнăçа кĕртсе пырать. Çавăнпа асăннă тӳлеве вăхăтра куçарса тăманни е пĕчĕккĕн çеç куçарни предприятисенче вăй хуракансен правине хĕснине пĕлтерет. Шел пулин те, районти «Паха тĕрĕ» тата «Ремстроймаш» АХОсем, «Кварт», «Чебоксарский бройлер», «Унга», «Акон», «Жилсервис», «Кугесьская» МСО, «Сельский комфорт» обществăсем, «Атăл», «Туруновский», Кадыков ячĕллĕ, «Атлашевский» хуçалăхсем, «Чувашагромаркет», «Дружба», «Гвардеец» предприятисем тата «Утес» санатори страховка тӳлевĕ куçарса тăрас ĕç çине тимлĕ пăхмаççĕ.

## 34 ÇУЛ ТОПСБЫТРА

**Александр Иванович Михайлов 34 çул ытла Шупашкартопсбытра вăй хурать. Пуçлăх пулма пĕрре те çăмăл марри каламасăрах паллă, уйрăмах паянхи кун.**

Кашни яла кĕтнĕ «кăвак çулăм» çитнĕ ĕнтĕ. Апла пулин те кăмрăксăр е вут-шанкăсăр ял çынни пурăнаймасть-ха. Тепĕр ватăсем газ кĕртмен. Мунча хутма е выльăх-чĕрлĕх валли апат пĕçерме ласра вутăпах усă курать ял çынни. Пахалăхлă кăмрăкпа е вутăпа тивĕçтересси – Шупашкар топсбычĕн пĕрремĕш тивĕçĕ.

Куллен хи ĕçре йывăрлăхсемсĕр пулмасть. Пултаруллă та тавçăруллă ертӳçĕне пула топсбыт ĕçченĕсем çулталăкри плана çулсерен пурнăçлаççĕ. Пурнăçлаççĕ кăна мар, çĕнĕлле ĕçлеме те хăнăхаççĕ. Дачникcене те манмаççĕ. Туркомплекссем, çавăн пекех уйрăм çынсем тĕрлĕ çĕрте усă курма ятарлă кăмрăк туянаççĕ.

«Юратнă ĕçĕм вăй-хал кӳрет»,– тет малашлăха çутă шанăçпа пăхса опытлă пуçлăх.

34 çул хушшинче мĕн чухлĕ йывăрлăхсене çĕнтерме тивмен пулĕ туслă коллективăн? «70-80-мĕш çулсем те куç умĕнчех»,– аса илет калаçура Александр Иванович. Шăпах çав çулсенче Шупашкар ГЭСне тăваççĕ. Топсбытăн мĕнпур çурт-йĕрĕ, сооруженийĕсем шыв илекен вырăна тиверççĕ. Çавна пула асăннă организаци Лапсар поселокĕнчи промзонăна куçать (паянхи кун та вăл çакăнтах вырнаçнă). «Базăна çĕнĕрен çĕклерĕмĕр, ĕçченсен тăрăшулăхĕпе чăтăмлăхне палăртмалла»,– аса илет ертӳçĕ. Александр Михайлов пурнăçне вăрман хуçалăхĕпе тата топливăпа энергетика комплексĕпе çыхăнтарнăшăн ӳкĕнмест. Вăл Патăрьел районĕнчи Каншел ялĕнче çуралса ӳснĕ, унти вăтам шкула пĕтерсен малалла Йошкар-Ола хулинчи М.Горький ячĕллĕ институтра пĕлӳ пухнă.

1973 çултанпа вара (34 çул!) хăйĕн пурнăçне Шупашкартопсбытпа çыхăнтарать. Ĕçне кура хисепĕ теççĕ. Александр Михайлов чылай Правительство наградине тивĕçнĕ. Чăваш Республикин промышленноçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Раççей Федерацийĕн топливăпа энергетика комплексĕн хисеплĕ ĕçченĕ. Нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн, энерготикăпа промышленноçа аталантарас енĕпе пысăк вăй хунăшăн Раççей Федерацийĕн Энергетика министерстви, çавăн пекех Раççей Федерацийĕн ирĕклĕ профсоюзсен федерацийĕ Хисеп грамотисемпе чысланă.

Александр Иванович Чăваш Республикинчи вăрман отраслĕнче вăй хуракансен профсоюз Президиумĕн, Чувашрессовпроф канашĕн членĕ.

Пушă вăхăт сахал унăн пулсан та, алă усса ларма юратмасть вăл. Политикăпа интересленет. Республикăри тата районти лару-тăрăва тишкерет. Пирĕн район тĕкĕрĕпе, «Тăван Ен» хаçатпа, туслă. Мăшăрĕпе, Елизавета Александровнăпа, пахчара ĕçлеме юратаççĕ, тĕрлĕ пахча-çимĕç, улма-çырла çитĕнтереççĕ.

Н.СТЕПАНОВА.

❋ Тĕрлĕрен

## ЯЛАНАХ ХУРАВЛАÇÇĔ

2006 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне районта 13292 пенсионер шутланнă (2005 çулхи 9 уйăхринчен 139 сахалрах). Вĕсене вăхăтра, пенси салатакан пай çирĕплетнĕ графикпа килĕшӳллĕн пенси парса тăраççĕ. Пенси фончĕн районти управленийĕн çак пайĕ кунсăр пуçне çынсене пособисем, çын вилсен уйăракан укçа çитерсе тăрать. Пенси çинчен калакан саккунран тухса тăракан пур ыйтăва та ăнлантарса парать. Çапла вара мĕн пĕлменнине, ăнланманнине çак управленин клиентсен службинче яланах ыйтса пĕлме пулать. Кунсăр пуçне районти пысăк предприятисенче тата ял тăрăхĕсенче çак управленин консультаци паракан 30 пункчĕ ĕçлет. Пенсипе çыхăннă ыйтусене вĕсенче те татса пама май пур.

## ШАНĂÇА ÇУХАТМАСĂР

Районта пурĕ 2740 инвалид, 18 пуçламăш организаци. Çав шутра пĕтĕм Раççейри инвалидсен обществин 520 членĕ.

Инвалидсен районти организацийĕн правленийĕн ĕçне Г.Г.Гурьев, А.А.Васильев, А.Г.Иванова, М.В.Иванова, А.А.Андриянов, И.М.Афанасьев, Л.Н.Мартынов, К.П. Осипова, Н.Н.Столяров тата ытти сем хастар хутшăнаççĕ. Инвалидсен республикăри уйрăмĕ Шупашкарта ирттерекен мероприятисене пурне те хутшăнатпăр. Сăмахран, спорт ăмăртăвĕсене Г.И.Шарков, пултарулăха кăтартакан выставкăсенче К.П.Осиповапа А.Е.Альфонс хастар хутшăнаççĕ. Хăш-пĕр пуçламăш организаци çумĕнче инвалидсем пахча-çимĕç, улма-çырла çитĕнтерекен юлташлăх йĕркеленĕ.

Организаци умĕнче кăçал çĕнĕ тĕллевсем тăраççĕ. Вĕсене пурнăçа кĕртме пирĕн инвалидсем хастар хутшăнасса шанатпăр.

А.АРХИПОВ, районти инвалидсен организацийĕн правленийĕн председателĕ.

## ТУЛЛИН УСĂ КУРНĂ

Район администрацийĕн халăха социаллă пулăшу паракан пайĕнчен редакцие пĕлтернĕ тăрăх, 2006 çулта районта республикăн «Вăрçă çулĕсенчи тыл ĕçченĕсене тата ĕç ветеранĕсене социаллă пулăшу парасси çинчен» саккунне туллин пурнăçланă: пурăнмалли çуртйĕршĕн тата коммуналлă хуçалăх тăкакĕсемшĕн тӳлеме вĕсене патшалăх укçа вăхăтра уйăрнă. Кунсăр пуçне вĕсем çыхăну тăкакĕсемшĕн саплаштарма та патшалăхран илнĕ.

Федерацин «Раççей Федерацийĕнче инвалидсене социаллă хӳтлĕх парасси çинчен» тата «Ветерансем çинчен» саккунĕсемпе килĕшӳллĕн пурăнмалли çурт-йĕр тата коммуналлă хуçалăх тăкакĕсене саплаштарма уйăракан укçапа та вăхăтра усă курнă. Чернобыльти аварие пĕтерме хутшăннисем те çав çăмăллăха тивĕçнĕ, мĕн уйăрнине çийĕнчех пĕтерсе пынă.

Республикăн «Ача ӳстерекен гражданcене патшалăх пособийĕ парасси çинчен» саккунĕпе пирĕн районта та кашни ачашăн уйăхри пособи, ача çуралнăшăн пособи тата йывăр çын чухнехи тата ача çуратнă хыççăнхи пособи, ачана 1,5 çула çитиччен пăхнăшăн пособи парса тăнă.

Федерацин «Çын вилсен пытарасси тата пытару ĕçĕ çинчен» саккунĕпе килĕшӳллĕн патшалăх кашни çемьене çывăх çыннисене пытарма укçа уйăрнă.

Çавăн пекех федерацин «Юн парасси çинчен», «Политика репрессийĕсене пула инкек тӳснисен ырă ятне таварасси çинчен» саккунĕсене, республикăн «Уйрăм граждансен категорийĕсене социаллă хӳтлĕх парасси çинчен» саккунĕсене те районта туллин пурнăçланă – района çак саккунсене пурнăçлама килнĕ укçапа çийĕнчех усă курнă. Редакцие тăратнă хута ĕненес пулсан, айккинче пĕр çын та тăрса юлман. Мĕнех, аван ку.

## ШĂТАТЬ Е ШĂТМАСТЬ

Специалистсем пĕлтернĕ тăрăх, вăрлăха темиçе çул валли илме кирлĕ мар. Кивĕрех вăрăсен шăтаслăхĕ çĕннисенчен япăхрах. Тепĕр енчен, çулсерен çĕнĕрен те çĕнĕ пахча-çимĕç сорчĕсем тухаççĕ.

Юлнă вăрлăха та каларса пăрахма ан васкăр. Мĕншĕн тесен вĕсенчен хăшĕсем темиçешер çул та шăтаслăхне чакармаççĕ. Сăмахран: кишĕр, укроп, кориандр вăрри 2-3 çул, пăрса, пăрăç, помидор вăрри 3-4 çул хăйсен пахалăхне чакармаççĕ. Шăтаслăхне лайăх тĕрĕслес тесен вăрăсен пĕчĕк пайне йĕпе татăк çине хурса шăтарса пăхмалла. Вĕсенчен çурри сăмсаланчĕ пулсан, хăюллăнах акма юрать, анчах та нормăран ытларах.

П.ПАВЛОВ.

❋ Сĕнӳсем

## ПЕНСИ ШУТЛАТТАРМА МĔН КИРЛĔ?

***✦ Хăвăрăн ĕç кĕнекине тĕплĕн тишкерĕр. Унта çырса пыни чăнлăхпа килĕшсе тăрать-и?***

***✦ Ĕç кĕнекинче çырнă хушаматăр, ятăр тата аçăр ячĕ паспортрипе пĕрешкел-и?***

***✦ Ĕçе илнине тата ĕçрен кайнине çирĕплетекен йĕркесен айĕнче çавраka пичет тата алă пусни пур-и?***

***✦ Сирĕн профессие ĕç кĕнекинче тĕрĕс палăртнă-и?***

***✦ Сире ĕçе илнине тата ĕçрен кăларнине ĕç кĕнекинче приказ номерĕпе тата датăпа çирĕплетнĕ-и?***

***✦ Предприяти пичечĕпе çирĕплетмен хушусем е тӳрлетсе çырнисем çук-и?***

***✦ Ĕç кĕнекинче хăвăр пĕр-пĕр çĕрте ĕçленине хăй вăхăтĕнче çырса, пичет çаптарса тата алă пустарса хăварман пулсан çав тапхăра стажа кĕртттерме малараx ĕçленĕ предприятие е архива ыйтупа тухăр.***

***✦ Сире пенси çăмăллăхлă стажа шута илсе вăхăт çитиччен шутласа пама палăртсан малтанах кадрсен службинче пенсие çăмăллăхлă стажпа кăларасси паллă пулнине пĕлме тăрăшăр. Паллă мар-тăк Пенси фончĕн районти уйрăмне çырупа тухма ан ӳркенĕр. Ĕçлемессĕр пулсан çăмăллăхлă стаж пулнине е пулманнине сире Пенси фончĕн районти уйрăмĕн клиентсен службинчи пĕлтерĕç.***

***✦ Стажа Пенси фончĕн органĕсем кашнине уйрăммăн учета илсе çырса пынă ĕç тапхăрĕсене çеç кĕртеççĕ. Çавăнпа кашнин асăннă органсенче индивидуаллă лицевой счет тата страхланине çирĕплетекен свидетельство пулмалла. Предприяти эсир вăй хунă тапхăр çинчен Пенси фончĕн уйрăмне çитернине е çитерменнине хăвăрăн пĕлсе тăмалла.***

***✦ Предприяти Пенси фондне сирĕншĕн страховка укçине куçарса пымасан эсир ĕçленĕ тапхăра тата ĕçлесе илнĕ суммăна сирĕн лицевой счетра палăртмаççĕ, çапла вара пенси палăртнă чухне çав тапхăра кĕртмеççĕ.***

Кăларăма Ю.МИХАЙЛОВ хатĕрленĕ.

# ОБЪЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРӲСЕМ

☎ 2-13-80

**В РГУ «Кугесьский детский дом-интернат для умственно отсталых детей»** Министерства здравоохранения и социального развития Чувашской Республики *требуются* на постоянную работу:

1. Няни-санитарки
2. Медицинские сестры
3. Слесари-сантехники

Оплата согласно штатного расписания.
Обращаться по адресу: *п.Кугеси, ул.Первомайская, д.14. Тел.: 2-15-84.*

**ООО «Агросоюз 21 регион»** *требуется* на работу юрист с опытом работы. Зарплата при собеседовании. *Обращаться по тел.: 2-51-21.*

**Собственники** земельных долей Вастрейкин И.В., Вастрейкина Т.В. сообщают о намерении выделиться из землепользования СХПК «Атăл» Чебоксарского района ЧР общей площадью 1,47 га пашни в поле № II второго полевого севооборота, ориентир 1150 м северо-восточнее от ул.Рыбацкая д.36 д.Адыльял. Свои возражения направить письменно в месячный срок по адресу: *п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.*

**Собственники** земельных долей Моросина З.С., Петухова Т.В. сообщают о намерении выделиться из земель с/х назначения на территории землепользования СХПК «Атăл» Чебоксарского района ЧР площадью по 1,47 га пашни каждая в поле №3, раб.уч. №2, западнее д.№17 по ул.Мира д.М.Сундырь. Возражения направить по адресу: *п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.*

**Собственники** земельных долей Феофанов В.Н., Самарина В.Ф., Кандикова Н.П. сообщают о своем намерении выделиться из земель СХПК «Сад» в счет земельных долей по 2,03 га пашни на третьем участке в поле №3 полевого севооборота в 200 метрах северо-восточнее д.Малые Карачуры. Свои возражения в течении месяца направить по адресу: *п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.*

**Собственники** земельных долей Рязанов И.Ф., Рязанов В.И. сообщают о своем намерении выделиться из земель СХПК «Атăл» Чебоксарского района ЧР в поле №4 первого полевого севооборота, раб.уч. №1 восточнее д.Онгапось общей площадью 1,54 га, в том числе пашни 1,47 га и пастбища 0,07 га. Возражения направить письменно в месячный срок по адресу: *п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района.*

**Участники** долевой собственности на землепользование СПК-колхоз «Пучах» Толстов В.П., Толстов К.В. сообщают о своем намерении выделить земельный участок общей площадью 1,88 га в поле №4, расположенного южнее д. Яранкасы. Возражения направить в месячный срок по адресу: *п. Кугеси, ул. Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.*

**Участник** долевой собственности на землепользование СПК-колхоз «Пучах» Чебоксарского района ЧР Степанов А.К. сообщает о своем намерении выделить земельный участок в поле №2 первого полевого севооборота площадью 1,88 га, расположенного за д.Селиванкино. Возражения направить в месячный срок по адресу: *п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.*

**Участник** долевой собственности на землепользование СХПК «Атăл» Чебоксарского района ЧР Карикова Л.В. сообщает о своем намерении выделить земельный участок площадью 1,47 га пашни в поле №2, раб.уч. №1 первого почвозащитного севооборота юго-восточнее д.14 по ул.Передняя д.Ойкасы. Возражения направить по адресу: *п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.*

**Участник** долевой собственности на землепользование СХПК «Слава» Чебоксарского района ЧР Филимонова Р.Ю. сообщает о выделе земельной доли площадью 2,2 га южнее д.С-Марги в пойме реки Кунар. Кадастровый номер 21:21:27 21 08: 0001. Возражения направить в течении 30 дней по адресу: *п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.*

**Поправка.** В райгазете «Тăван Ен» № 140 от 6.12.06 г. в объявлении о выделении земельной доли Романову И.Г. вместо «северо-восточнее» следует читать «юго-восточнее».

**Поправка.** В газете «Тăван Ен» №№ 2-3 от 13.01.07г. в объявлении о выделении земельных участков из земель СПК-колхоз «Пучах» Горшковой В.Т. и др. вместо «…Федотова К.Д.» следует читать «…Федотова К.К.»

**Поправка.** В райгазете «Тăван Ен» №№ 144-145 от 16.12.06 г. о выделении земельной доли Антоненко Л.И. вместо слов «по ул.Столовая» следует читать «по ул.Становая».

*ОАО «Чурачикское» реализует маленьких бычков по цене 80 рублей за 1 кг живого веса. Обращаться по тел.: 31-4-83, 31-5-63.*

*Адвокат – 8-917-655-75-35.*

**Предполагается** продление на 11 месяцев срока аренды земельного участка площадью 0,10 с кадастровым номером 21:21:07 01 06:0164, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, с. Синьялы, ул. Водопроводная, д.26 (земли населенных пунктов), для индивидуального жилищного строительства, *адрес: п. Кугеси, ул. Шоссейная, д.15, тел. (8240) 2-15-92, администрация Чебоксарского района.*

**Участники** долевой собственности Якимов С.А.-1,88 га пашни, Захаров Н.И.-0,97 га пашни, Любимова Е.Н.-0,96 га пашни сообщают о своем намерении выделить земельные участки в поле №1 второго полевого севооборота, расположенного возле д.Янду из земель СПК-колхоза «Пучах» Чебоксарского района ЧР. Возражения направить по адресу: *п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района.*

**Участники** долевой собственности на землепользование СХПК им. И.Г.Кадыкова Алексеева З.В. 2,15 га пашни, Григорьев В.А. (представитель Григорьев В.В.) 2,15 га пашни, Григорьева А.Е. (представитель Григорьев В.В.) 2,15 га пашни сообщают о своем намерении выделиться из земель СХПК им.И.Г.Кадыкова Чебоксарского района в поле № V, рядом с коллективным садом Ветеран-2. Возражения просим прислать в течении 30 дней по адресу: *п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.*

**Участник** долевой собственности на землепользование СХПК им. И.Г.Кадыкова Чебоксарского района ЧР Краснов Юрий Николаевич, проживающий по адресу: ЧР, Чебоксарский район, с.Синьялы, на основании протокола общего собрания участников долевой собственности от 26.11.2005 г. и ст.13 закона «Об обороте земель с/х назначения» сообщает о своем намерении выделить земельные участки по следующим ориентирам и площадям: 1) 2,15 га пашни в поле №4 первого полевого севооборота в 1470 м юго-западнее жилого дома №3 по ул.Верхняя д.Юраково Чебоксарского района ЧР и 0,27 га пастбища в 3860 м западнее жилого дома №96 по ул.Заречная д.Янашкасы Чебоксарского района ЧР; 2) 2,15 га пашни в поле №4 первого полевого севооборота в 1380 м юго-западнее жилого дома №3 по ул.Верхняя д.Юраково Чебоксарского района ЧР и 0,27 га пастбища в 3720 м западнее жилого дома № 96 по ул.Заречная д.Янашкасы Чебоксарского района ЧР; 3) 2,15 га пашни в поле №4 первого полевого севооборота в 1350 м юго-западнее жилого дома №3 по ул.Верхняя д.Юраково Чебоксарского района ЧР и 0,27 га пастбища в 3650 м юго-западнее жилого дома № 96 по ул.Заречная д.Янашкасы Чебоксарского района ЧР; 4) 2,15 га пашни в поле №4 первого полевого севооборота в 1320 м юго-западнее жилого дома №3 по ул.Верхняя д.Юраково Чебоксарского района ЧР и 0,27 га пастбища в 3630 м юго-западнее жилого дома №96 по ул.Заречная д.Янашкасы Чебоксарского района ЧР; 5) 2,15 га пашни в поле №4 первого полевого севооборота в 1290 м юго-западнее жилого дома №3 по ул.Верхняя д.Юраково Чебоксарского района ЧР и 0,27 га пастбища в 3600 м юго-западнее жилого дома №96 по ул.Заречная д.Янашкасы Чебоксарского района ЧР; 6) 2,15 га пашни в поле №4 первого полевого севооборота в 1270 м юго-западнее жилого дома №3 по ул.Верхняя д.Юраково Чебоксарского района ЧР и 0,27 га пастбища в 3590 м юго-западнее жилого д.№96 по ул.Заречная д.Янашкасы Чебоксарского района ЧР; 7) 2,15 га пашни в поле №4 первого полевого севооборота в 1250 м юго-западнее жилого д. №3 по ул.Верхняя д.Юраково Чебоксарского района ЧР и 0,27 га пастбища в 3560 м юго-западнее жилого д.№96 по ул.Заречная д.Янашкасы Чебоксарского района ЧР. Площадь образуемых участков осуществляется в пределах кадастровой стоимости, установленной для с/х угодий, в границах которых образуются данные земельные участки. Возражения прошу присылать в течении месяца со дня выхода в печать настоящего объявления по адресу: *п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.*

**Участники** долевой собственности землепользования СПК-колхоз «Пучах» Чебоксарского района Яруткина Р.Г., Ильбаторкин М.Ф., Горшков А.А., Егорова А.Е., Григорьев В.П., Малышкин В.С., Шуркин Г.П. сообщают о своем намерении выделить земельные участки в натуре в поле №1 кормового севооборота по 1,88 га каждый, Капранова З.Г., Капранова В.И. в поле №1 кормового севооборота по 0,94 га каждый, расположенного южнее д.Синьял-Покровское, Кузьмина М.К., Максимова В.И., Яковлева Г.В., Атласкина О.И., Петрова Р.М., Якимова Г.В., Федотова Л.В. земельные участки в поле №4 кормового севооборота по 1,88 га каждый, расположенного южнее д.Синьял-Покровское, Семенова И.Ф., Егоров Г.Ф., Кузьмина Г.Ф., Егорова Н.Ф. земельные участки в поле №2 кормового севооборота по 0,32 га каждый, расположенного юго-восточнее д.Синьял-Покровское. Свои возражения направить по адресу: *п.Кугеси, ул.Шосейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.*

**Предполагается** предоставление в аренду земельного участка площадью 0,45 га, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д.Микши-Энзей, сроком на 11 месяцев для ведения огородничества.
Адрес: *администрация Чебоксарского района, п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15.*

**Предполагается** предоставление в аренду земельного участка площадью 0,1316 га, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д.Коснары, ул.Советская (земли населенных пунктов), сроком на 11 месяцев для огородничества.
Адрес: *п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.*

**Предполагается** предоставление в собственность за плату земельного участка площадью 0,0386 га с кадастровым номером 21:21:18 05 01:0069, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д.Тренькасы (земли населенных пунктов), для огородничества.
Адрес: *п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.*

**Предполагается** предоставление в аренду земельного участка площадью 0,0252 га, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д.Чергаши, ул.Пригородная (земли поселений), сроком на 11 месяцев для огородничества.
Адрес: *п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.*

**Предполагается** продление на 11 месяцев срока договора аренды земельного участка площадью 0,10 га, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, с.Синьялы, ул.Мельничная, д.51 (земли поселений), для индивидуального жилищного строительства.
Адрес: *п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.*

**Предполагается** предоставление в собственность за плату земельного участка площадью 0,0360 га с кадастровым номером 21:21:07 01 05:0061, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, с.Синьялы, ул.Мельничная (земли поселений), для огородничества.
Адрес: *пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.*

**Предполагается** предоставление в аренду земельного участка площадью 0,50 га, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д.Адыльял, сроком на 11 месяцев для ведения огородничества.
Адрес: *п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.*

**Предполагается** продление на 11 месяцев срока аренды земельного участка 0,10 га с кадастровым номером 21:21:15 09 03:0016, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д. Вурманкасы (земли сельхозназначения), для огородничества.
Адрес: *пос. Кугеси, ул. Шоссейная, д.15, тел. (8240) 2-15-92, администрация Чебоксарского района.*

**Предполагается** предоставление в аренду земельного участка площадью 0,0420 га, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д. Хирле-Сир, ул. Южная (земли населенных пунктов), сроком на 11 месяцев для огородничества.
Адрес: *пос. Кугеси, ул. Шоссейная, д.15, тел. (8240) 2-15-92, администрация Чебоксарского района.*

**Предполагается** предоставление в аренду земельного участка площадью 0,09 га, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д.Шинер-Туруново, ул.Яблоневая (земли населенных пунктов), сроком на 11 месяцев для огородничества.
Адрес: *п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.*

**Предполагается** предоставление в собственность за плату земельного участка площадью 0,0343 га с кадастровым номером 21:21:15 05 01:0016, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д. Ойкасы, ул. Октябрьская (земли населенных пунктов), для огородничества.
Адрес: *пос. Кугеси, ул. Шоссейная, д.15, тел. (8240) 2-15-92, администрация Чебоксарского района.*

**Добавление.** В райгазете «Тăван Ен» № 22-23 от 4.03.06 г. в объявлении о выделении земельных долей Зубковой С.Г. и др. после фамилии «Никитина А.Ю.» добавить фамилию «Никитина Л.Н.» и далее по тексту.

✵ ✵ ✵

МУЗ «Чебоксарская центральная районная больница» скорбит и выражает глубокое соболезнование фельдшеру Николаю Анатольевичу Кудрявцеву в связи со смертью отца
**Анатолия Васильевича**
**КУДРЯВЦЕВА.**

МУЗ «Чебоксарская центральная районная больница» скорбит и выражает глубокое соболезнование врачу-психиатру-наркологу районной больницы №2 Наталии Владимировне Гавриловой в связи со смертью отца
**Владимира Филипповича**
**СОКОЛОВА.**

ТĂВАН ЕН
(«КРАЙ РОДНОЙ»)
Чебоксарская районная газета

Учредители:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики,
РГУ «Редакция Чебоксарской районной газеты "Тăван Ен"»,

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу 8 ноября 2005г. ПИ №ФС 18-2477

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, отдел сельского хозяйства, отдел писем, отдел общественно-политической жизни - 2-21-88, бухгалтерия - 2-13-80, 2-12-59. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер отпечатан в ГУП «ИПК «Чувашия». Тел.21-00-23.

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

Дежурный по номеру: В.Т.ИВАНОВА.

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист.
Номер подписан в печать: 16.01.2007 г. в 16 час. 00 мин.
Тираж 1800. Заказ №
Индекс газеты - 54820.